# «Апатланĕ пулă коммунистсемпе»

Çĕнĕрен чĕрĕлсе тăнă «Сунтал» журналăн кăçалхи 1-мĕш номерĕнче Митта Петĕрĕн 100 çулхи юбилейне сумлăн палăртнăччĕ. Миттасен йăх-тымарĕ калама çук çирĕп те патвар пулнă. Вăл чăваш тĕнчине талантлă та тӳр кăмăллă ывăл-хĕрсем парнеленĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ – Митта Ваçлейĕпе Петĕрĕ – чăваш литературинчи чи сумлă ятсем. Шел пулин те, уйрăм çынна Турă вырăнне хунă саманара вĕсен шăпи синкерлĕ пулса тухнă. Çапла пултарулăхра хăйсен çуначĕсене ирĕккĕн сарса яма пӳрмен.

Митта Ваçлейĕпе манăн анне Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ, ăна час-часах аса илетчĕ. Анчах унăн малалли шăпи çинчен пĕлместчĕ. Иртнĕ ĕмĕрти аллăмĕш çулсенче Митта Ваçлейĕн ырă ячĕ таврăнсан эпĕ унпа пĕр хутчен мар тĕл пулса калаçнă. Манăн аннене те астăватчĕ вăл.

Митта Петĕрĕн япалисене эпĕ вуланăччĕ-ха. Анчах вăл мĕнле майпа «çухалнине» пĕлменччĕ. «Сунталта» К.Киргизова çырнине вуласан çакă мана калама çук пăлхантарса ячĕ. Çавăнпа кун пирки хамăн шухăша вулакансене Сергей Есенин поэт поэминчи сăвă виçисемпех пĕлтерес килчĕ.

«1940 çулхи çу уйăхĕнче вăл (Митта Петĕрĕ – А.Ю.) хăйĕн икĕ ĕçтешĕпе калаçса ларнă чухне Сергей Есенинăн сăввине вуланă. Пĕр хайлавĕнче çак йĕркесем пулнă:

«...Пароходы плывут мимо пристани.
Будем рыбок кормить коммунистами».

Çакă «хăрушă» йĕркесене Петр Егорович таçтан вăрттăн вуласа пĕлмен, вĕсем вырăс поэчĕн 1940 çулсенче тухнă «Çырнисен пуххи» кĕнекинче уççăнах пичетленнĕ. Апла пулсан та пĕр ĕçтешĕ, Шигильчев хушаматлăскер (тепĕр документсем çирĕплетнĕ тăрăх Шипильчев), НКВДна çăхав çырса парать, унта «Митта Совет влаçне хирĕç» тесе ĕнентерет. Усал ырра çĕнтернĕ: колхоз йĕркелени, республика шайĕнче ĕçлекен завода хута яни çинчен çĕр ытла калавпа фельетон çырса Совет влаçне ура çине тăратма пулăшни ниме те пĕлтермен».

Ксения Киргизова
(«Сунтал», 2010, 1 номер).

К.Киргизова цитатăна кăшт тĕрĕсех илсе кăтартман. С.Есенин çапла çырнă:

«Пароход идет
Мимо пристани.
Будем рыбу кормить
Коммунистами».

Поэтăн асăннă цитатине «Песнь о великом походе» поэмăран илнĕ. Унта С.Есенинăн халăх пултарулăхне çывăх чĕлхе пуянлăхĕ уйрăмах курăмлăн палăрса тăрать. Ку вăл – унăн эпикăлла сулăмпа çырнă чи лайăх хайлавĕсенчен пĕри. Поэма халăх ирĕклĕхĕшĕн нумай ĕмĕр хушши пынă синкерлĕ кĕрешĕве

таръннăн сăнласа кăтартать: «Алексеич Петĕр» императортан тытăнса 1917 çулхи Октябрьти социализмлă Аслă революци таран. Поэт хĕрлисем çĕнтернĕшĕн савăнать:

Вот и кончен бой,
Машет красный флаг.
Не жалея пят
Удирает враг.

Поэма оптимизм туйăмĕпе вĕçленет:

Вот и кончен бой,
Тот, кто жив, тот рад.
Ай, да вольный люд,
Ай, да Питер-град!

Çапла вара унта «Совет влаçне хирĕç» çырнă йĕрке шăрши те çук. Çăхавра асăннă цитата – автор шухăшĕ мар, икĕ енлĕ хаяр кĕрешӳри шуррисен сăмахĕ, автор вĕсен чĕлхипе çавăрттарса каланă сăнарлă сăмах кăна. Çакăншăн «Совет влаçне ура çине тăратма пулăшнă» тӳрĕ чунлă чăваш писательне элеклесе айăпланине уйрăмах ăнланма йывăр. Мĕн тăвăн? Пулнă ун пекки те. Çитменнине сахал та мар. Малашне тек ан пултăрччĕ темелли çеç юлать.

## МИТТА ПЕТĔРНЕ

Хурлă шăпуна
Эп пĕлеттĕм-ха.
Çиелтен кăна
Илтнĕ ман хăлха.

Пулнă, пиччӳ пек,
Элек мăшкăлĕ.
Пĕтнĕ пуçĕпех,
Пулнă – çук халĕ.

Пулнă – халĕ çук,
Çуннă таланту.
Пулнă çамрăк, шух,
Влаçпала тату.

Таса çăл куç пек,
Пиччӳ еверлĕ.
Чăмнă пуçĕпех
Пурнăç аварне.

Чун пек савнă эс
Вырăс поэтне.
Эй, ăçтан пĕлес
Хум вĕçне-хĕрне!..

Кӳр-ха эс ăна,
Еплелле чĕлхи!
Çывăх туйăнать
Иртнипе хальхи.

«Пăрахутăн çулĕ –
Пристань айккипе.
Апатланĕ пулă
Коммунистсемпе».

Ку вăл – ют сăмах,
Ку – тăшман чĕлхи.
Тек ан пул ухмах,
Путтăр ĕлĕкхи.

Пулнă ку чăнах
Пирĕн пурнăçра.
Хăçан-ши чăваш
Пурнĕ çăтмахра?..

Кĕтни йăлт пулать
Кĕрешсен кăна.
Кур: поэт мухтать
Çĕн саманана.

Çăмăл мар, паллах,
Çак кĕрешӳре.
Тĕрлĕрен йăх-ях
Кансĕрлет пире.

Ху та начар мар
Çырнă прозăпа.
Ăшунта кăвар
Çуннă çулăмпа.

Тухнă ирхине
Ял-йышпа хире.
Хирнĕ киввине
Çăмăл мар ĕçре.

Тепĕр çын тус пек –
Чунĕ-мĕн хура.
Вăл кӳрет инкек,
Вăл хурать ура.

Кам анкă-минки
Питĕрет çула...
Тухнă ун тинки
Синкерлĕ çулла.

Çапла курнă шар
Эс кĕтмен çĕртен.
Хупа юнашар
Пĕр ĕçтешӳнтен.

Пĕртте çĕнĕ мар
Çак йăла пирте.
Тӳссе куртăмăр
Инкекне пурте.

Пур-ха, пур çавах
Тĕнчере чăнни.
Çĕнтерет вăлах –
Çĕн ĕмĕр çынни.

Аякри çĕрте
Эс курсан та хур,
Пирĕнпе пĕрле
Эс паян та пур.

**_Анатолий ЮМАН,_**
**_Чĕмпĕр облаçĕ_**